• *Кун-çул*

# Ялти чи ватă çын



**Илья Михайлов – Элĕк районĕнчи Асамат ялĕнчи чи ватă çын, кĕçех 88 çул тултарать. Вăл – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çапăçнă харсăр салтак. Вĕрентекен пулма ĕмĕтленнĕ Илья Михайлович. Анчах вăрçă унăн ĕмĕчĕсене вăхăтлăха татнă.**

– 42-мĕш çулхи пуш уйăхĕнче çара илчĕç, Инçет Хĕвел тухăçне лекрĕм. Пирĕн ялтан 61 çын вăрçа кайнă. Çирĕм пиллĕкĕшĕ кăна тăван тăрăха çаврăнса çитнĕ, – аса илет ветеран. – Шел, ĕмĕрĕсем вĕсен те кĕске пулчĕç. Вăрçăра пулнисенчен ялта эпĕ кăна юлтăм ĕнтĕ.

Михайлов аслă сержант 1947 çулта тин киле таврăннă. Çĕнтерӳçĕ-салтака виçĕ уйăхран уй-хир бригадирне çирĕплетнĕ. Икĕ çул вăл ял халăхĕпе пĕрле хуçалăхра кар тăрса ĕçленĕ. Кĕçех пултаруллă çамрăка райĕçтăвкомăн культура пайĕн инспекторне уйăрса лартнă. Унта тăватă çул вăй хунă хыççăн пединститута вĕренме кайнă. Ăна ăнаçлă пĕтерсен райкомăн пропагандăпа агитаци пайне вырнаçнă. Ĕçленĕ хушăрах Хусанта иккĕмĕш аслă пĕлӳ илнĕ. Икĕ дипломлă ăста специалист вăтăр çул ытла Элĕкри вăтам шкулта ачасене тарăн пĕлӳ парас енĕпе тăрăшнă. Михайловăн мăшăрĕ те, Анастасия Ильинична, кунтах утмăл çула яхăн счетовод-кассирта ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă.

Михайловсем икĕ хĕрпе пĕр ывăл çуратса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă, аслă пĕлӳ илме пулăшнă. Ачисем – вĕсен савăнăçĕ, мухтавĕ. Утмăл çула яхăн пĕрле пурăнакан мăшăр виçĕ хутчен çурт лартнă, çирĕп хуçалăх тытнă, йышлă выльăх усранă. Ĕçпе вăрçă ветеранĕн чун киленĕçĕ – пыл хурчĕсем. Вĕсене пăхма вăл кинне Зинаидăна вĕрентсе хăварасшăн.

Пурнăça тата çут çанталăка хаклама пĕлекен Илья Михайлович нихăçан та чĕлĕм туртман, эрех-сăрапа айкашман, никампа та урлă пулман, çынна сăлтавсăр кӳрентермен. Вăл СССР Географи обществин членĕ, çак пĕрлĕхĕн Хисеп хутне тивĕçнĕ. Ветеранăн кăкăрне тĕрлĕ орден-медаль илем кӳрет.

■ **Геннадий САВЕЛЬЕВ**